# ИСКУСТВĂ ПАЙĔ

## Ђăваш кĕсли.

Йуратаççĕ ђăвашсем кĕсле каланине итлеме. Кĕслен сасси илемлĕ, йанăравлă. Тађах—«йереветлĕ, теветлĕ» тенĕ пек. Çавăнпа ађашланса, ђуна йăпатса кĕрет хăлхана кĕсле мусăкĕ. Вăйлă, ђăрсăр кĕвĕсем калама кам ытлашши пикенĕ кĕслепе? Сук, хĕçпăшал кĕрленине кĕсле çителĕхлĕ каласа параймаст̆. Маршсене калакалаççĕ те, анђах вăл йăслани çеç пулат̆. Марш вађђи йăс тăрпасем кирлĕ. Кĕсле—ађаш мусăк, вăл—ђĕрçи мусăкĕ. Хытă калама тăрсан çинçе хĕлĕхсем йăслаççĕ, йанкăшаççĕ. Хулленрех каласан—кĕсленĕн йап-йака, тулли сасăсем те тухма пултараççĕ. Хулленрен хуллен каласан кĕсле мусăкĕ питĕ илемлĕ. Вара кĕсле мусăкĕн мĕлкисем, «опрăссем», шевле выђанă пек сывлăша ђĕтретсе иртсе кайаççĕ. Ађаш сасăсем хăлхана выђаса, кулса, кăтăкласа кĕреççĕ, вĕсем ђун хевтине пырса тивеççĕ, ăна йăпатса, ыйăхри пек çăмăллăн çĕклесе илсе вĕççе улăхса кайаççĕ. Хитре, илемлĕ, ђуна кăмăллă кĕсле калани...

Ăçтан тухнă вăл, кĕсле? Мĕнле кўрĕш халăхран вĕренсе йулнă ђăвашсем кĕсле калама? Ђăваш халăхĕн мусăкĕ çулĕ çинђе мĕнле вырăн йышăнса тăнă кĕсле? Малалла кĕслене тивĕçлемеллеи? йе пăрахса хăвармаллаи? Куђттурă сийĕсем çĕнĕрен хушăнса ўснĕ вăхăтра çак ыйтусене те сўтсе йавма хăйĕн тивĕçлĕхĕ пур. Мĕншĕн тесен, ђăваш ĕçхалăхĕ хушшинђе кĕсле тахçантампа сарăлнă. Ђăваш ĕçхалăхĕ кĕсле мусăкне йуратат̆. Искуствă тĕлĕшĕнђен илсен—кĕсле мусăкĕ ђылай куђттурăллă йапала. Ђи тиркевĕçĕллĕ криттĕк те кĕсле каланине хурлама пултараймаст̆. Ђăваш хушшинђе кĕслене пите вирттуослă, арттислă, хутошĕствăллă калама пĕлекенсем пур. Сăмахран каласан, хамăр хушăмăрти Илле Никколайевиђ Йаштайкĕн (ĕлĕк стутент ђух) столитсăри пысăк контсертсенђе итлекенсене тĕлĕнтерсе пĕтернĕ кĕслене çав тĕрлĕ хитре каланипе. Вăл апла пултăрха хăйĕн майĕпеле, анђах епĕр кунта: ђăваш ĕçхалăхĕ хушшинђе кĕсле куђттурăллă, паха йапала тесе каласшăн. Кĕсле ĕççыннине хăйĕн хутошĕствăллă интересне, хăйĕн естеттĕклĕ хевтисене меслетсе иртерме пулăшат̆. Çавăнпа кĕсле историне, кĕсле ђăваш хушшине ăçтан килсе сарăлнине пĕлме интереслĕ йапала.

Вырăс уђонăйсем каланине итлесен, ђăвашсен хăйсен кĕсле пулман. Ђăвашсем кĕсле тума вырăссенђен вĕреннĕ. Ђăваш уђонăйĕ проф. Н. В. Никкођски те çав сăмаха хирĕç ним те шарламаст̆ (Конспект по истории народной музыки у народностей Поволжья. Казань, 1920). Паллă уђонăй А. С. Филинçтин çырнă тăрăх, «кĕсле» сăмах славенпе вырăс ђĕлхинђи „гудеть“ сăмахран тухса кайнă. (Гусли—русский народный музыкальный инструмент. СПБ, 1890). Каланă майлă ђăнах та вырăс халăхĕн йўмахĕсенђе «гусли—самогуды» т. ыт. те çавнашкал сăмахсем пур. (Даль, Толковый словарь, 1877). Çаксем каланă тăрăх, кĕслене ђи малтан ĕлĕкхи ĕмĕрсенђе пурăннă хĕвел тухăç йенђи халăхсем тума вĕреннĕ. Кĕсле Аçи çĕрĕнђен Висантийе куçнă, унтан славенсем хушшинђе сарăлнă, çавăн ђух вырăссем те кĕсле тума вĕреннĕ. Анђах ун ђухне кĕсле хађхи формăллă пулман, вăл „лирă“ майлăрах пулнă. Вăл формăна XIII ĕмĕрти кĕнекесем хуппи çийĕнђе курма пулат̆ (Труды Московск. Архерлогическ. Общ., Т. III, стр.).

Çапла ĕнтĕ кĕсле хĕвел тухăç йенђи Аçи çĕрĕсенђен Висанти урлă каçса килнĕ тенине пĕлтĕмĕр. Пирĕн шухăшпа кĕсле Йевроппăна тепĕр çулпа та килме пултарнă. Вăл — Киттай çĕрĕнђен хуннсем урлă килекен çул. Авалхи киттайсен кĕсле пулнă тесе никам та каламаст̆, анђах киттайсен кĕсле йĕвĕрлĕ мусăклă струмент пулнă. Вăл—«тђе» йе тепĕр тĕслĕ каласан «ше». Нимĕçсен уђонăйĕ Е. Науман çырат̆: „Тђе кĕсле йĕвĕрлĕ, ăна 9 фут тăршĕ хăмаран тунă, çине 25 хĕлĕх туртса кăкарнă“ (Всеобщая история музыки. СПБ, 1897). Киттай халăхĕн ĕлĕк авал кĕсле пек струмент пулни Таранђи халăхĕ мусăкĕнђен те паллă. Таранђи халăхне киттайсем хăйсен хушшинђен хăваласа кăларса йанă, Таранђисем Киттайран хăйсемпе пĕрле «калун» йатлă мусăклă струмент илсе тухнă. «Калун» кĕслепе пĕр ăрат, пĕр йышши йапала. Таранђисем хађте калун калама пăрахман (Н. Пантусăв. Таранчинские песни. СПБ, 1890). Киттай халăхĕ хунсенђен темĕн ђухлĕ куђттурăллă халăх пулнă. Çавăнпа та хунсем киттайсенђен мусăк ĕçне те вĕренсе йулма пултарнă. Тен ђăваш тĕп—аслашшĕсем таранђи халăхĕ пек «калун» йĕвĕрлĕ кĕсле илсе тухнă Аçи çĕрĕнђен? Кайран, Йевроппăна куçсан, вĕсем Йевроппăри халăхсене те хăйсен мусăкĕпе паллаштарма пултарнă. Ђи малтан—кунта тĕп авалтанах пурăнакан фин ăратти халăхĕсене. Мĕншĕн тесен ахађ мар пулĕ финсен те «калун» йевĕрлĕ мусăклă струмент пулнă.

Ђăнах та кĕслене «лирă» формилле мар, хађхи формă йевĕрлĕрех, ытларах каласан «калун» формиллĕ. тума пĕлни финсенђен пуçланса кайни палăрат̆. Финсен «Калевалă» йатлă епăслă поеминђе кĕсле йĕвĕрлĕ мусăклă струмент çинђен калани пур. Вăл струмента «кăнтеле» тенĕ. «Кăнтеле» формине „кĕсле ашшĕ“ теме йурат̆, вăл пĕре те «лирă» йевĕрлĕ мар, каснă лартнă «калун» йĕвĕрлĕ (Сборн. антропологическ. и этнограф. статей о России, изд. Дашковым. 1868, т. I, стр. 163). Кăнтеле, тепĕр тĕслĕ каласан „куаклĕс,“ форминђен пуçланса кĕсле хађхи формăна çитнĕ. Вырăссен хушшинђе çĕн формăллă кĕсле XVII-мĕш ĕмĕрте палăрма пуçлат̆. Ђăвашсем хушшинђе хăçан сарăлма пуçлани çинђен тĕл пулса вуласа курман. Анђах К. Миллĕр (1791 ç.) тата И. Кеорки (1799 ç.) çырнă тăрăх, XVIII-мĕш ĕмĕрте ђăвашсен кĕсле ђи йуратнă мусăк пулнă. Апла пулсан кĕсле ђăвашсем хушшинђе тата маларах сарăлма пуçлани палăрат̆. Йевроппăри нимĕçле мусăк капланса киле пуçласан, вырăссен хушшинђе кĕсле пăрахăça тухма пуçлат̆, „кармошкă“ т. ыт. те вăйй илме пуçлаççĕ. Çав тĕлтех ђăвашсем, çармăссем, вотексем хушшинђе кĕсле пушшех сарăлса пырат̆. (А. Маслов. Иллюстрированное описание музыкальных инструментов. Москва, 1909). Ђăвашсем кĕслене пысăклатаççĕ, хитре, илемлĕ формăллă тума вĕренеççĕ: авалрах 18—20 хĕлĕхлĕ анђах тунă пулсан, хађ пысăк кĕслесене 36—40 хĕлĕхлĕ тăваççĕ.

Çĕнĕ формăллă ђăваш кĕсли иртнĕ XIX-мĕш ĕмĕрте ђылай ђапа тухнă. 1865-мĕш çулта Мускаври муçейсенђе курăнма пуçлат̆ (Изв. Русск. Геогр. Общ. 1865, т. I. стр. 151). 1867-мĕш çулта ђăваш кĕсли Мускаври етнокрафи выстăвккине тухат̆ (Сборник антропологии).

етнограф. статей тенĕ кĕнекерех). 1868-ш çулта ђăваш кĕсли çинђен кĕнекесем çинђе çырма пуçлаççĕ (А. Владимирский. О законах музыкальной гармонии и национальных музыкальных инструментах. Çавăнтах). 1896-мĕш çулта ђăваш кĕсли Ђул-Хулари выстăвккăра пулнă. Експонатсене выстăвккăна Çĕнйал—Оринĕн йалĕнђи ђăваш маçтăрĕ П. Волккăв тăратнă (И. Липайĕв. Музыка на Всероссийской выставке в Н.-Новгороде в 1896 г.). Вăрçăђђен ђăваш кĕслине Мускаври (Тсиммерман хуçа), Хусаути (Прйуно хуçа) пысăк мусăккађнăй макаçĕнсенђе сутма пуçланă. Анђах вăл хуçасем «йат çĕртес» мар тесе хăйсен таварне „ђăваш кĕсли“ тесе палăртман, «иностранные, заграничные гусли» тесе улталанă (Н. Никольский. Кратк. Конспект по этнографии чуваш. Казань, 1919).

Йулашки сăмахра çакна калас пулат̆. Хăт те кирек ăçтан килнĕ пулсан та кĕсле ђăваш хушшинђе XVII—XVIII-мĕш ĕмĕрсенђе саралнă теме йурат̆. Унтан пуçласа халиђђен ђăвашсем кĕсле калама пăрахман. Кĕслене ђăвашсем пысăклатса, хитрелетсе, вăйлантарса пынă. Çавăнпа ђăваш ĕçхалăхĕ хушшинђе кĕсле питĕ паха вырăн йышăнса тăрат̆. Кĕслене пĕђђен калама та йурат̆, купăспа, тăмрапа т. ыт. те хутăшса пĕрле калама йурат̆. Çавăнпа кĕслене клупсене, халăх çуртсене, шкулсене кӳртме тăрăшмалла. Кĕсле калакансене пăхса конкурс туса пăхас пулат̆. Кĕсле тăвакан маçтăрсене выстăвккă тутарттарас пулат̆, вĕсене «мухтавлă çвитеттĕлствă» памалла тăвас пулат̆, ђи лайăх експонатсене муçейсене хăварма тăрăшас пулат̆. Кĕсле тăвакансене кустарлă йулташлăхсем туса пĕрлештерме те йурат̆. Кĕсле каймаст̆ мар, лайăх тусан кайатех. Тен тепришĕн кĕсле усламĕ ђăпта çапнинђен те усăлăрах пулĕ.

Ырă сунатпăр ђăваш кĕслине.

**Ф. Павлăв.**